### «Вырма-2009» умĕнхи тĕрĕслев

# Çĕнĕ çăкăр яваплăх ыйтать

Раççейре «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ ĕçленĕ вăхăтра пурнăç утăмĕнчен юлмасăр пырасси – паян çĕр ĕçĕпе пурăнакан кашни ĕçченĕн тĕллевĕ. Çавăнпа та Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров ял хуçалăхне килекен çĕнĕлĕхсенчен çывăрса юлмасăр ĕçлеме чĕнсе калани те аслă асаттесем кая юлсан каю шăтать тесе асăрхаттарнипе тӳр килет. Пурнăç аталанăвне тивĕçлĕ шайра тытма кун-çул уттипе тан пырассишĕн эпир кашниех çĕнĕлĕхсем вырăнли пирки, вĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшмалли çинчен калаçатпăр. Калаçатпăр та... пирĕн сăмахсем чылай чух чул çине мар, юр çине çеç юлаççĕ. Çак сăмахсене çывхаракан вырма пирки каласан тата вырмана хатĕрленес ĕçсем вырăнсенче епле пынине пăхса тухсан чылай чух чун ыратса каять. Анчах мĕн тăвăн – çитменлĕхсем нумаййине курса чуна хытарсах çывхаракан вырмана хатĕрленетпĕр.

Пурнăçпа тан пырас тесен кун йĕркине тухакан ыйтусене ырана хăвармасăр татса панине нимĕн те çитмест. Çакна ăнланса тата хирсене çывхаракан вырмана асилтерсе сарă сăн кĕнине курса район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ çак кунсенче хуçалăхсем вырмана епле хатĕрленнине тĕрĕслеме пуçларĕ. Тĕрĕслевĕн пĕрремĕш серепине “Оринино”, «Восток», «Лидер», «Герой», «Свобода», Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсем лекрĕç. Каламалла, нихăшĕ те пурнăçри улшăнусемпе тан пыниех курăнмарĕ. Иртнĕ тунти кун тĕрĕслев пулнă ял хуçалăх производство кооперативĕсенчен нихăшĕнче те «хир карапĕсем» ĕçе тухма ирĕк илеймерĕç. Çакă хуçалăхсенче юсав ĕçĕсене тин кăна пуçăнни пирки пĕлтерет. Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсăр пуçне çав кун пур çĕрте те комбайнсене юсас ĕçсем пыратчĕç.

– Юсав ĕçĕсене вăхăтра туни хуçалăхăн производствăпа экономики çине ырă витĕм кӳрет. Акă хуçалăхра техникăна упрасси тата ăна çĕнетесси çулленех кун йĕркинче малти вырăнта тăрать. Кăçалхи вырмана виçĕ «Дон-1500» тухĕ. Вĕсене пулăшма килекенсем те пулмалла. Пĕр сăмахпа, мĕн акса ӳстернине хирте хăвармастпăрах. Ĕç планĕсем те, ĕç килĕшĕвĕсем те хатĕр, – терĕ «Свобода» хуçалăхри мехпарк бригадирĕ М. Кирпичников.

Çĕнĕлĕхсемпе тан пыраççĕ тенĕрен, вырмана хатĕрленес ĕçсем “Оринино”, «Восток» хуçалăхсенче те малтуртăмлă. Орининсем кăçалхи вырмана икĕ «ДОН – 1500», икĕ “Енисей” кăларас ĕмĕтлĕ. Вĕсене тата йĕтемсене юсас ĕçе хуçалăхра пуçăннă ĕнтĕ. Пĕрлехи вăйпа кăçал кунта çĕршер гектар тĕш-тырăпа пăрça йышши культурăсене пуçтарса кĕртмелле.

– Ыранхи кунпа пурăнакан çĕр ĕçченĕн паян уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курса вырăх апачĕ хатĕрлессипе тимлемелле, кунсерен çывхаракан вырмана хатĕрленессине те кун йĕркинче тытмалла. Вырмана тухсан çеç ĕç тумтирĕпе медицина тĕрĕслевĕн, комбайнсем çинчи медицина аптечкисемпе огнетушитель ыйтăвĕсем пулмалла мар. Çаксене эпир паянах татса парас тетпĕр, – çирĕппĕнех калаçрĕ «Восток» хуçалăх ертӳçи М. Шишокин.

Çапла, çĕр ĕçченĕсем паян «симĕс ĕç çинче» вăй хунă хушăрах вырма та çывхарнăçемĕн çывхарать. Кăçал пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен пурĕ 15 пин гектара яхăн тĕш-тырăпа пăрça йышши культурăсене пуçтарса кĕлете хумалла. Паян уй-хире тухсан тырă-пулă ăнса пулни куçкĕрет, анчах уйри вăл кĕлетри мар-ха. Çавăнпа та ăна çухатусемсĕр пухса кĕртесси – çĕр ĕçченĕ умĕнче тăракан паянхи тĕп задача.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче паян пурĕ 63 комбайн шутланать. “Хир карапĕсене” тивекен ĕç калăпăшĕ пирки калас пулсан, кунсерен çывхаракан вырмара пĕр комбайн пуçне вăтамран 236 гектар вырма лаптăкĕ тивет. Çавăнпа та вырмара çăкăра тата Çĕр-аннемĕре хисеплесе пĕр-пĕрне пулăшма яланах хатĕр пулмалла. Çавна валли комбайнсен запас пайĕсене хатĕрлессине, регулировка ĕçĕсене тĕплĕ тăвассине ырана хăвармасăр пурнăçламалла. Манас çук, “хир карапĕ” пусăпа пырать те юрать тени çĕр ĕçченĕн сăмахĕ мар. Комбайн анапа кайрĕ пулсан, вăл уйра мĕнле пахалăхпа ĕçлени комбайнера та, ертсе пыракан специалистсене те, хуçалăх ертӳçине те тăтăш шухăшлаттармалла. Кунпа пĕрлех комбайнсене хире кăлариччен вĕсен хăйсем ĕçе юрăхлине çирĕплетсе ирĕк илмелли çинчен усăмлă каланине те кашниййĕнех тимлĕ итлесчĕ.

Мĕнех, вырмана хатĕрленсе хуçалăхсенче юлашки юсав ĕçĕсем пурнăçлаççĕ. Хирте вара çӳллĕ ӳснĕ тырă пиçсех пырать.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн экономика пайĕн редакторĕ.**

### Редакци почтинчен

# Манăн вĕренекенсем – хастар вĕрентекенсем

Ярапайкассинчи вăтам шкул умĕпе иртнĕ чух яланах хам учитель пулнă вăхăтсем аса килеççĕ. Кунта халĕ эпĕ вĕрентнĕ ачасем виççĕшĕ учительте вăй хураççĕ.

Лия Петровна Сорокина шкул хыççăн Канашри педучилищĕре вĕренчĕ, кайран Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтерчĕ. 29 çул ĕнтĕ вăл кĕçĕн классене тарăн пĕлӳ парассишĕн тăрăшать. Сакăр кăларăм унăн хальлĕхе. Вăл вĕрентнĕ ачасем гимназипе лицейсенче те малалла ăс пухнă. Ачасене пур енлĕн аталантарас тесе Лия Петровна хăйĕн пĕлĕвне те ӳстерсе пырать: 1 категориллĕ учитель.

Валерия Витальевна Воробьеван та шкул хыççăнхи утăмĕсем çавнашкалах: педучилище, кайран – институт. Вăл малтанах Калайкассинчи шкулта ĕçлеме тытăнать. 1981 çултан пуçласа хăй вĕреннĕ Ярапайкассинчи вăтам шкулта ĕçлет. Ачасене тĕрлĕ конкурссене явăçтарать. Республикăра, районта иртнĕ конкурссенчен унăн вĕренекенĕсем призлă вырăнсемпе таврăнаççĕ. Ашшĕ-амăшĕсене те час-часах тĕл пулусене чĕнет.

Маргарита Александровна Антонова пирки те ырăпа çеç асăнмалла. Шкул пĕтернĕ хыççăн институтран та аван вĕренсе тухать. Малтанах направленипе Элĕк районĕнчи шкулта ĕçлет. Каярах Ярапайкассинех таврăнать. 22 çул ĕнтĕ Маргарита Александровна вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. Вăл хăйĕн профессине питĕ юратать. Çавăнпах пулĕ вĕренекенĕсем те унăн утăмĕсемпе каяççĕ.

Ачасене вĕрентесси вăл чăнах та чăн-чăн наука. Ачасем тăрăшса вĕренччĕр, тĕрлĕ конкурссенче çĕнтерччĕр тесен мĕн чухлĕ вăй хумалла вĕт-ха. Шкулта вĕреннĕ чухнех тăрăшуллă пулнăскерсем, манăн çак виçĕ вĕренекен паян кун та питĕ пултаруллă, хастар. Вĕсен ĕçне тивĕçлипе хакланине нумай грамотăсемпе Тав çырăвĕсем çирĕплетеççĕ. Малашне те вĕсене пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма вăй-хал сунас килет.

Çавăн пекех мана питĕ йывăр вăхăтра пысăк пулăшу панăшăн Ярапайкасси шкулĕнче ĕçлекен учительсене, директора тав сăмахĕ калатăп. Эдуард Александровича вара ĕне çухалсан тупса пулăшнăшăн пысăк тав.

**К. ПОТЯНОВА.**
**Итакачкасси ялĕ.**

### Вулакан пултарулăхĕ

# Кăвар юрату

Эс паян мана хăваран
Пĕччен тунсăха пăрахса,
Сипленми суран-йĕр тăван
Пĕрле пулнине час манса.

Ĕмĕтре, вăрах шухăшра
Кĕтетĕп эп темшĕн сана,
Тĕлĕкре – курман пурнăçра
Куратăп тек мĕншĕн сăнна.

Инçетре сан уçă сассу,
Мана илтĕнес текех çук.
Саншăнах çут çул пулассу
Мана çутатас урăх çук.

Юрату, таса хĕр юрри
Вăратĕç-ши тек тунсăха?
Ырату кăвар хĕр чĕри,
Тупайĕ-ши чăн туслăха?

**Тамара МИХАЙЛОВА.**
**Ваçкасси ялĕ.**

**Результаты открытого аукциона** на право заключения договора купли-продажи на земельные участки, расположенные на территории Моргаушского района от 7 июля 2009г.
На основании постановления главы Моргаушского района от 18.05.2009 года № 291 состоялся открытый аукцион право заключения договора купли-продажи на земельные участки, расположенные на территории Моргаушского района 7 июля 2009 года в малом зале заседаний администрации Моргаушского района по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, 6
Аукцион провело Общество с ограниченной ответственностью «Юридическая фирма «Гарантия права»
Заказчик аукциона: Администрация Моргаушского района

| № лота | Месторасположение земельного участка | Целевое назначение, кадастровый номер земельного участка | Площадь, кв.м. | Начальный размер стоимости земельного участка, руб. | Вид права | Победитель аукциона | Размер стоимости земельного участка, установленный аукционом, руб |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Нижние Панклеи, ул. Заречная (земли населенных пунктов) | Для ведения огородничества 21:21:270304:15 | 3600 | 44700 | собственность | Пыркин Василий Владимирович | 46935 |
| 3. | Участок находится примерно в 158 м. по направлению на северо-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Трудовая, дом 2а. земли населенных пунктов) | для строительства и эксплуатации торгового киоска 21:17:060402:108 | 40 | 4222 | собственность | Попова Зоя Сергеевна | 4433,10 |
| 4. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Максикасы, ул. Солнечная (земли населенных пунктов) | Для индивидуального жилищного строительства 21:17:091501:33 | 4000 | 61300 | собственность | Федорова Оксана Александровна | 64365 |
| 5 | Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Красная Площадь (земли населенных пунктов) | для ведения личного подсобного хозяйства, 21:17:160305:11 | 2000 | 35800 | собственность | Романов Сергей Михайлович | 37590 |
| 6. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Кашмаши, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:170205 (земли населенных пунктов) | для ведения личного подсобного хозяйства, 21:17:170205:122 | 4131 | 53600 | собственность | Федоров Александр Сергеевич | 56280 |
| 7. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Кашмаши, ул. А. Ярикова (земли населенных пунктов) | для ведения личного подсобного хозяйства, 21:17:170205:121 | 5623 | 73000 | собственность | Кожевников Владимир Алексеевич | 76650 |
| 8. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Юнгапоси, ул. Солнечная (земли населенных пунктов) | для ведения личного подсобного хозяйства, 21:17:080501:51 | 1271 | 19500 | собственность | Васюхин Владимир Алексеевич | 20475 |
| 9. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Анаткасы, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:190402 (земли населенных пунктов) | для содержания и эксплуатации магазина, 21:17:190402:105 | 217 | 19800 | собственность | Смирнова Раиса Евстафьевна | 20790 |
| 10 | Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Тереси, ул. Молодежная (земли населенных пунктов) | для ведения личного подсобного хозяйства 21:17:110101:124 | 2046 | 39200 | собственность | Аристархова Татьяна Витальевна | 41160 |
| 11 | Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Авданкасы, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:280401(земли населенных пунктов) | для ведения личного подсобного хозяйства 21:17:280401:106 | 4062 | 55300 | собственность | Краснов Ефим Анатольевич | 58065 |
| 12 | Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Авданкасы, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:280401(земли населенных пунктов) | для ведения личного подсобного хозяйства 21:17:280401:107 | 4785 | 65200 | собственность | Краснов Николай Анатольевич | 68460 |

Прим. Аукцион по лоту №2 признан несостоявшимся в связи с отсутствием заявок.

**Результаты открытого аукциона** на право заключения договора аренды на земельные участки, расположенные на территории Моргаушского района от 7 июля 2009г.
На основании постановления главы администрации Моргаушского района от 18.05.2009 года № 291 состоялся открытый аукцион право заключения договора аренды на земельные участки, расположенные на территории Моргаушского района 7 июля 2009 года в малом зале заседаний администрации Моргаушского района по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, 6
Аукцион провело Общество с ограниченной ответственностью «Юридическая фирма «Гарантия права»
Заказчик аукциона: Администрация Моргаушского района

| № лота | Месторасположение земельного участка | Целевое назначение, кадастровый номер земельного участка | Площадь, кв.м. | Начальный размер годовой арендной платы земельного участка, руб. | Вид права | Победитель аукциона | Размер стоимости земельного участка, установленный аукционом, руб |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, территория землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в юго-восточной части квартала 21:17:072501 (земли сельскохозяйственного назначения) | Для ведения сельскохозяйственного производства 21:17:072501:1219 | 18328 | 830 | аренда | Данилов Сергей Валерьевич | 15894,50 |
| 2. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, территория землепользования ЗАО «Колос», участок расположен центральной части квартала 21:17:072501 (земли сельскохозяйственного назначения) | Для ведения сельскохозяйственного производства 21:17:072501:1215 | 85737 | 5280 | аренда | ООО «ВТМ» | 6600 |
| 3. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, территория землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в юго-восточной части квартала 21:17:072501 (земли сельскохозяйственного назначения) | Для ведения сельскохозяйственного производства 21:17:072501:1214 | 168223 | 11040 | аренда | СПОК «Кадикасинский» | 13800 |
| 4. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, территория землепользования ЗАО «Колос», участок расположен в центральной части квартала 21:17:072501(земли сельскохозяйственного назначения) | Для ведения сельскохозяйственного производства 21:17:072501:1212 | 85226 | 4940 | аренда | ООО «ВТМ» | 5928 |